26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
7
ВЫРСАРНИКУН
222(6459) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. СТАЛИН юлташ Ĕçсынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн Мускав хулинчи партипе общество организацийĕсемпе пĕрле 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче тунă доклад

(Ĕççынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн председателĕ Пронин юлташ Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне И. В. Сталин юлташа сăмах парать.

Трибуна çине тухнă Сталин юлташа чаплă ларăва пухăннă халăх тăвăллăн, нумайччен алă çупса саламлать.

Залра пур çĕртен те: „Сывă пултăр пирĕн çулпуç аслă Сталин!", „Аслă Сталина урра!", „Сталин юлташа урра!"—тенĕ саламлă сасăсем илтĕнсе тăрсçĕ.

Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Сталин юлташ доклад тума пуçлать).

ЮЛТАШСЕМ!

Паян Совет Союзĕн халăхĕсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 26 çул тултарнине уявласа ирттереççĕ.

Виççĕмĕш хут пирĕн çĕршыв хăйĕн халăх революцийĕн уявне Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра паллă тăвать.

1941 çулхи Октябрьте пирĕн Тăван çĕршыв йывăр кунсем пурăнса ирттерчĕ. Тăшман столица çывăхнех çитсе тăчĕ. Тип çĕр енчен Ленинграда хупăрласа илчĕ. Пирĕн çарсен ирĕксĕрех чакса пымалла пулчĕ. Тăшмана Мускав патĕнче чарса лартма тата ăна вăйлăн пырса çапма çар питех те нумай вăй хуни тата халăхăн пĕтĕм вăйне ĕçе кўлни кирлĕ пулчĕ.

1942 çулхи Октябрь тĕлне пирĕн Тăван çĕршывшăн хăрушлăх татах та ўсрĕ. Тăшман ун чухне Мускавран пĕр 120 километрта кăна тăнă, вăл Сталинграда çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕ, Кавказ тăвĕсем патне çывхарчĕ. Анчах çак йывăр кунсенче те çарпа халăх хăйсен шанчăкне çухатмарĕç, пур испытанисене те çирĕппĕн тўссе ирттерчĕç. Тăшмана тытса чарма тата ăна хирĕç пырса çапма вĕсем вăй тупрĕç. Аслă Ленин хушса хăварнисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе, хăйсен вăйĕпе пурнăçне те шеллемесĕр, вĕсем Октябрьти Революци çĕнтерсе илнисене хўтĕлерĕç. Паллă ĕнтĕ, çарпа халăх çакăн пек вăй хуни ахаль пĕтмерĕ.

Иртнĕ çулти Октябрь кунĕсем хыççăн часах пирĕн çарсем наступлени пуçларĕç те нимĕçсене малтан Сталинград патĕнче, Кавказра, Дон шывĕн вăтаçĕр районĕнче, ун хыççăн 1943 çул пуçламĕшĕнче Великие Луки, Ленинград патĕнче, Ржевпа Вязьма районĕнче çĕнĕрен хăватлăн пырса çапрĕç. Çакăн хыççăн Хĕрлĕ Çар пуçарулăха текех хăйĕн аллинчен вĕçертмерĕ. Кăçалхи пĕтĕм çуллахи вăхăтра вăл тăшмана вăйлăраххăн та вăйлăраххăн пырса çапрĕ, унăн вăрçăри мастерлăхĕ уйăхран уйăхах ўссе пычĕ. Унтанпа пирĕн çарсем пысăк çĕнтерўсем тăваççĕ, нимĕçсем вара пĕр поражени хыççăн тепĕр поражени тўсеççĕ. Тăшман темĕнле те тăрăшрĕ, анчах вăл Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче мĕн чухлĕ те пулин пысăк çĕнтерў пĕрре те тума пултараймарĕ.

1. Вăрçă ĕçĕнчи татăклă улшăну çулталăкĕ

Иртнĕ çул — Октябрьти Революци 25 çул тултарнинчен пуçласа вăл 26 çул тултарни таран—Отечественнăй вăрçăри улшăну çулталăкĕ пулса тăрать.

Çак çул чи малтан çакăн пирки улшăну çулталăкĕ пулса тăрать: кăçалхи çул Хĕрлĕ Çар вăрçă вăхăтĕнче чи малтанхи хут нимĕç çарĕсене хирĕç çулла пысăк наступлени туса пычĕ, пирĕн çарсем пырса çапнине пула, нимĕççен фашистла çарĕсен хăйсем тытса илнĕ территорие ирĕксĕрех васкавлăн пăрахса хăвармалла пулчĕ, чылай чухне вара хупăрласа илесрен тарса çăлăнмалла тата çапăçу хирĕнче питĕ нумай техника, хĕçпăшалсемпе боеприпассен складĕсене, аманнă салтаксемпе офицерсене пăрахса хăвармалла пулчĕ.

Çапла ĕнтĕ, кăçалхи çулăн иккĕмĕш çуррине пирĕн çуллахи кампанин ăнăçăвĕсем пирĕн кăçалхи çул пуçламĕшĕнчи хĕллехи кампанин ăнăçăвĕсене малалла ўстерсе вĕçлени пулса тăчĕç.

Халĕ, Хĕрлĕ Çар хĕллехи кампанин ăнăçăвĕсене аталантарса нимĕç çарĕсене çулла хăватлăн пырса çапнă хыççăн, Хĕрлĕ Çар çуллахи вăхăтра ăнăçлă наступлени тума пултараймасть текен халлапсене татăклăнах путлантарса лартнă теме пулать. Хĕрлĕ Çар çулла та, хĕллехи пекех, наступлени тума лайăх пултарнине иртнĕ çул кăтартса пачĕ.

Çак наступленилле операцисене пула, пирĕн çарсем иртнĕ çулта çапăçусем туса пырса, фронтăн центрти пайĕнче 500 километра çити тата кăнтăрта 1.300 километра çити малалла кайрĕç (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ), пĕр миллион тăваткăл километра çити территорие, урăхла каласан, тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ совет çĕрĕн 2/3 пайне çити ирĕке кăларчĕç, çак вăхăтра тăшман войскисене Владикавказран пуçласа Херсон патне, Элистăран пуçласа Кривой Рог патне, Сталинградран Киев патне, Воронежран Гомель патне, Вязьмăпа Ржевран Оршăпа Витебск çывăхĕнчи вырăнсем патне çити ывăтса янă.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче хăйсем малтан тунă ăнăçусен çирĕплĕхне ĕненмен пирки, нимĕçсем малтанах, нумай вăхăт хушши, уйрăмах пысăк шывсем тăрăх оборона тумалли хăватлă линисем туса хатĕрленĕ. Анчах та кăçалхи çапăçусенче нимĕççене юханшывсем те, хăватлă укрепленисем те çăлса хăвараймарĕç. Пирĕн çарсем нимĕççен оборонине çĕмĕрсе тăкрĕç тата 1943 çулхи çуллахи виçĕ уйăх хушшинче кăна тăвата питĕ пысăк шыв чăрмавĕ урлă — Çурçĕр Донец, Десна, Сож тата Днепр шывĕсем урлă питĕ пултаруллăн каçрĕç. Нимĕççен Миус шывĕ районĕнчи — Ростовран хĕвеланăçнерехри оборони тата Молочная шывĕ районĕнчи — Мелитополь патĕнчи оборони пек чăрмавсем çинчен эпĕ каламастăп та ĕнтĕ. Халĕ Хĕрлĕ Çар тăшмана Днепр шывĕн леш енче ăнăçлăн аркатса пырать.

Çак çул тата çакăн пирки улшăну çулталăкĕ пулчĕ: Хĕрлĕ Çар чылай кĕске вăхăт хушшинчех нимĕççен фашистла çарĕсен вăтă, опытлăрах кадрĕсене çĕмĕрсе тата лўчĕркесе пĕтерме пултарчĕ, çавăнпа пĕрлех кăçалхи наступленилле ăнăçлă çапăçусенче хăйĕн кадрĕсене пиçĕхтерчĕ тата йышлатрĕ. Иртнĕ çул хушшинче Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи çапăçусенче нимĕççен фашистла çарĕ 4 миллион салтакпа офицера ытла çухатрĕ, вĕсенчен пĕр миллион та 800 пин çынран сахал мар вилсе пĕтнĕ. Кунсăр пуçне нимĕçсем çак çул хушшинче 14.000 ытла самолет, 25.000 ытла танк тата 40 пинрен кая мар тупăсем çухатнă.

Халĕ ĕнтĕ нимĕççен фашистла çарĕ вăрçă пуçланнă чухнехи çар мар. Вăрçă пуçланнă чухне унăн çителĕклĕ таранах опытлă кадрсем пулнă пулсан, халĕ вăл çĕнĕрен пĕçерсе кăларнă çамрăк та опытсăр кадрсемпе шĕвелсе тăрать, вĕсене нимĕçсем васкасах фронта яраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен офицерсен кирлĕ чухлĕ резервĕ те, вĕсене вĕрентсе хатĕрлеме вăхăт та çук.

Хĕрлĕ Çар халĕ ĕнтĕ пачах урăхла тĕслĕх кăтартать. Унăн кадрĕсем иртнĕ çулхи ăнăçлă наступленилле çапăçусенче ўссе пиçĕхрĕç. Унăн боевой кадрĕсен хисепĕ ўсет тата малалла та ўссе пырĕ, мĕншĕн тесен офицерсен кирлĕ резервĕсем пурри ăна çамрăк офицерсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлеме, вĕсене ответлă вырăнсене куçарма вăхăт тата май парать.

Çакна палăртмалла: пирĕн фронтра пĕлтĕр тăнă 240 дивизи вырăнне, вĕсенчен 179-шĕ нимĕç дивизийĕсем пулнă, — кăçалхи çул Хĕрлĕ Çар фрончĕ умĕнче 257 дивизи тăрать, вĕсенчен 207-шĕ нимĕç дивизийĕсем.

Нимĕçсем хăйсен дивизийĕсен пахалăхĕ чакнине вĕсен йышне ўстернипе витме шутлаççĕ пулас. Анчах нимĕçсем иртнĕ çулта поражени тўсни дивизисен пахалăхĕ начарланнине вĕсен йышне ўстернипе витме май çуккине кăтартса парать.

Вăрçă тĕлĕшĕнчен пăхсан, нимĕç çарĕсем пирĕн фронтра поражени тўсни çак çул вĕçленнĕ тĕле икĕ питех те пысăк событисенчен килнĕ: çакă вăл Сталинград патĕнчи çапăçусенчен тата Курск патĕнчи çапăçусенчен килнĕ.

Сталинград патĕнчи çапăçу нимĕççен 300 пинлĕ çарне çавăрса илнипе, çавна çапса аркатнипе тата çавăрса илнĕ çарсен виççĕмĕш пайне яхăн тыткăна илнипе вĕçленчĕ. Сталинград уйхирĕсенче пулса иртнĕ историре халиччен нихăçан та курман çапăçусен пысăкăшне ăнланса илес тесен, çакна пĕлмелле: Сталинград патĕнчи çапăçу вĕçленнĕ хыççăн нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 147.200 виллине тата совет салтакĕсемпе офицерĕсен 46.700 виллине пуçтарса илсе пытарнă. Сталинград нимĕççен фашистла çарĕн кунçулĕ пĕтсе ларасси çывхарни пулса тăчĕ. Çакă паллă, Сталинград патĕнчи çапăçусем хыççăн нимĕçсем урăх хал илеймерĕç.

Курск патĕнчи çапăçусене илсен, вĕсем нимĕççен фашистла çарĕсен наступлени туса пыракан икĕ тĕп ушкăнне çапса аркатнипе тата пирĕн çарсем контрнаступлени пуçласа янипе вĕçленчĕç. Çав контрнаступлени кайран Хĕрлĕ Çарăн çуллахи хăватлă наступленийĕ пулса тăчĕ. Курск патĕнчи çапăçусем нимĕçсем Курск çине çурçĕртен тата кăнтăр.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

УКРАИНĂРИ 1-МĔШ ФРОНТĂН çарĕсем, тăшмана çавăрса илмелли хăюллă маневр туса, çав тери хăвăрт операци туса ирттернĕ хыççăн паян, ноябрĕн 6-мĕшĕнче, тул çутăлса килнĕ вăхăтра, Совет Украинин столицине—КИЕВ хулине, промышленноçăн чи пысăк центрĕ тата нимĕççен ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи оборонин стратеги тĕлĕшпе чи кирлĕ тĕвви пулса тăраканскере, штурмласа тытса илнĕ.

КИЕВ хулине тытса илсе, пирĕн çарсем нимĕççене ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи Украинăран хăваласа кăларас тĕлĕшпе ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи чи паха та чи усăллă плацдарма йышăнса илчĕç.

КИЕВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче МОСКАЛЕНКО генерал-полковникăн тата ЧЕРНЯХОВСКИЙ генерал-лейтенантăн çарĕсем, РЫБАЛКО генерал-лейтенантăн танкисчĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн КРАСОВСКИН летчикĕсем тата артиллери генерал-майорĕн КОРОЛЬКОВĂН артиллерисчĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

МЕЛЬНИКОВ генерал-майорăн 167-мĕш икĕ хут Хĕрлĕ ялавлă Сумски стрелковăй дивизийĕ, УЛИГИН генерал-майорăн 232-мĕш Сумски стрелковăй дивизийĕ, ЗУБАРЕВ полковникăн 340-мĕш Сумски стрелковăй дивизийĕ, КАРЛОВ полковникăн 163-мĕш Роменски стрелковăй дивизийĕ, УМАНСКИЙ полковникăн 240-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ПУЗИКОВ полковникăн 136-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ШМЕЛЕВ генерал-майорăн 180-мĕш стрелковăй дивизийĕ, чехословаксен СССР-ти СВОБОДА полковник ертсе пыракан 1-мĕш уйрăм бригади, КУЗНЕЦОВ полковникăн 74-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ЩЕРБАКОВ подполковникăн 23-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ЯНКОВСКИЙ полковникăн 30-мĕш стрелковăй дивизийĕ, СКЛЯРОВ генерал-майорăн 218-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ЛАДЫГИН генерал-майорăн 121-мĕш Рыльски стрелковăй дивизийĕ, РАССАДНИКОВ полковникăн 141-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ПЕТРЕНКО полковникăн 226-мĕш Глуховски стрелковăй дивизийĕ, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КРАВЧЕНКĂН 5-мĕш гвардейски Сталинградски танковăй корпусĕ, танковăй çарсен генерал-майорĕн ПАНФИЛОВĂН 6-мĕш гвардейски танковăй корпусĕ, СУЛЕЙКОВ генерал-майорăн 7-мĕш гвардейски танковăй корпусĕ, ВЕТРУК полковникăн 291-мĕш Воронежски штурмовой авиаци дивизийĕ, НЕЧИПУРЕНКО полковникăн 202-мĕш Средне-Донской бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ, авиаци генерал-майорĕн БАЙДУКОВĂН 4-мĕш гвардейски штурмовой авиаци дивизийĕ, КЛОБУКОВ подполковникăн 264-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ, ГЕРАСИМОВ полковникăн 256-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, ЧУБИКОВ подполковникăн 8-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă истребительнăй авиаци дивизийĕ, ЮЗЕЕВ полковникăн 208-мĕш Хĕрлĕ ялавлă çывăха вĕçекен çĕрлехи бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ, СРЫВКИН полковникăн 10-мĕш гвардейски Сталинградски истребительнăй авиаци дивизийĕ, авиаци генерал-майорĕн ЛАКЕЕВĂН 235-мĕш Сталинградски истребительнăй авиаци дивизийĕ, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКИНШТЕЙНĂН 17-мĕш артиллери дивизийĕ, артиллери генерал-майорĕн КРАСНОКУТСКИН 13-мĕш артиллери дивизийĕ, КОЛЕСНИКОВ полковникăн 3-мĕш гвардейски минометнăй дивизийĕ, ЦЕÇАРЬ подполковникăн 112-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă тупăллă артиллери полкĕ, ТЕТЕРИН майорăн 805-мĕш гаубицăллă артиллери полкĕ, ЧИСТЯКОВ подполковникăн 839-мĕш гаубицăллă артиллери полкĕ, НЕМОВ подполковникăн 12-мĕш уйрăм минометнăй бригади, ЧЕРНОВ подполковникăн 9-мĕш гвардейски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади, ПЛАХУНОВ майорăн 491-мĕш минометнăй полкĕ, ГЛУЩЕНКО майорăн 492-мĕш минометнăй полкĕ, КОДЯКОВ майорăн 222-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, КОРОЗИН подполковникăн 316-мĕш гвардейски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ЧЕХ майорăн 868-мĕш Хĕрлĕ ялавлă истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, БЕРЕЗИН майорăн 1666-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, АНДРЕЕВ майорăн 1075-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ПОНОМАРЦЕВ подполковникăн 4-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, БРАЗГОЛЬД полковникăн 24-мĕш гвардейски тупăллă артиллери бригади, РАСТОРГУЕВ капитанăн 60-мĕш корректировка тăвакан уйрăм авиаци эскадрильи, БАРИНОВ капитанăн 811-мĕш разведка тăвакан уйрăм артиллери дивизионĕ, ЕМЕЛЬЯНОВ полковникăн 8-мĕш çўлелле перекен артиллери дивизийĕ, ГУДКОВ полковникăн 21-мĕш çўлелле перекен артиллери дивизийĕ, ЧЕЧИШВИЛИ капитанăн 268-мĕш уйрăм инженерла батальонĕ, ЖУКОВ майорăн 7-мĕш уйрăм инженерла батальонĕ, АРТЕМЬЕВ майорăн 1505-мĕш уйрăм

(Юлашки 3-мĕш страницăра)

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Совет Союз Маршалне Иосиф Виссарионович СТАЛИНА 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçăра Хĕрлĕ Çарăн операцийĕсене тĕрĕс ертсе пынăшăн тата тунă çитĕнўсемшĕн Совет Союз Маршалне Иосиф Виссарионович СТАЛИНА 1-мĕш степень СУВОРОВ орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕ.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. СТАЛИН юлташ Ĕçсынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн Мускав хулинчи партипе общество организацийĕсемпе пĕрле 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче тунă доклад

Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра

тан наступлени тума тытăннипе пуçланчĕç. Çакă вăл нимĕçсем çуллахи вăхăтра пысăк наступлени тума та та, вăл ăнăçлă пулнă пулсан, çухатнине каялла тавăрма юлашки хут хăтланса пăхни пулчĕ. Паллă ĕнтĕ, наступлени путланса ларчĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕçсен наступленине сирсе пăрахрĕ кăна мар, хăй наступлени тума тытăнчĕ те, умлăн-хыçлăнах темиçе хут пыра-пыра çапса, çуллахи тапхăрта нимĕçсен фашистла çарĕсене Днепр леш енне сирсе ывăтрĕ.

Сталинград патĕнчи çапăçу нимĕçсен фашистла çарĕ пĕтсе ларассине палăртрĕ пулсан, Курск патĕнчи çапăçу ăна катастрофа умне пырса тăратрĕ.

Çак çул, юлашкинчен, çакăн пирки те улшăну çулталăкĕ пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен, Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пыни фашистла Германин хуçалăхри тата вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи лару-тăруне тĕпренех начарлатрĕ, ăна питĕ йывăр кризис умне пырса тăратрĕ.

Нимĕçсем, хăйсем çухатнине тавăрас тесе тата хăйсен Европăри хавшама тытăннă авторитетне çĕклес тесе, кăçал çуллахи вăхăтра Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра ăнăçлă наступлени тума ĕмĕтленнĕ. Анчах та Хĕрлĕ Çар нимĕçсен ĕмĕтне ӳпĕнтерсе хучĕ, вĕсен наступленине сирсе пăрахрĕ, хăй наступлени тума тытăнчĕ те нимĕçсене хĕвеланăçнелле хăваласа кайрĕ, çапла вара нимĕç хĕçпăшалĕн авторитетне таптаса тăкрĕ.

Нимĕçсем вăрçа вăраха яма шут тытрĕç, оборона валли рубежсемпе «валсем» тума тытăнчĕç, хăйсен çĕнĕ позицийĕсем никам çĕнтерейми пулса тăрассĕ тесе пĕтĕм тĕнче илтмелле пĕлтерчĕç. Анчах та Хĕрлĕ Çар нимĕçсен ĕмĕтне кунта та ӳпĕнтерсе хучĕ, вĕсен рубежĕсемпе «валĕсене» татса пăрахрĕ, халĕ ĕнтĕ малалла ăнăçлă наступлени туса пырать, нимĕçсене вăрçа вăраха яма вăхăт памасть.

Нимĕçсем фронтри лару-тăрăва «тотальнăй» мобилизаци тунипе тӳрлетме ĕмĕтленчĕç. Анчах событисем кунта та нимĕçсен ĕмĕтне ӳпĕнтерсе хучĕç. Çуллахи кампани «тотальнăй» мобилизаципе пухнă çынсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайне пĕтерсе хучĕ, анчах çакă вăл нимĕçсен фашистла çарĕн лару-тăруне мĕн енчен те пулин лайăхлатни сисĕнмест-ха. Тен, татах та тепĕр «тотальнăй» мобилизаци туса иртерессе çинчен пĕлтерме лекет пулĕ, анчах вара çакăнпа пĕрлех, çав йышши ĕçе тепĕр хут туса иртерни хăшпĕр государство «тотальнăй» йĕркепех пĕтсе ларасси патне илсе çитермĕ тесе шухăшлама нимĕнле сăлтав та çук. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Нимĕçсем, хăйсен çарĕпе халăхĕ валли Украинăри ялхуçалăх продукчĕсемпе усă курас тесе, Донбасс кăмрăкĕпе — нимĕç çарĕшĕн ĕçлекен заводсемпе чугун çул транспорчĕ валли усă курас тесе, Украинăна хăйсен аллинчех çирĕппĕн тытса хăварма ĕмĕтленчĕç. Анчах вĕсем кунта та йăнăшрĕç. Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн наступлени туса пынине пула, нимĕçсем Донбасс кăмрăкне кăна мар çухатрĕç, çавăн пекех тата Украинăн тырпул тĕлĕшпе чи пуянрах облаçĕсене те çухатрĕç, çакăнпа пĕрлех вĕсем çывăх вăхăтсенчех Украинăн ытти пайне те çухатмĕç тесе шухăшлама нимĕнле сăлтав та çук. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Паллах ĕнтĕ, çав йăнăшсем фашистла Германин хуçалăх тата вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи лару-тăруне япăхлатмасăр хăвармарĕç, тĕрĕссипех япăхлатрĕç.

Фашистла Германи питĕ йывăр кризиса кĕрсе ӳкрĕ. Вăл ĕнтĕ катастрофа умĕнче тăрать.

2. Фронта пĕтĕм халăх пулăшни

Халăх пулăшман пулсан, совет çыннисем фабрикăсемпе заводсенче, шахтăсемпе рудниксенче, транспортпа ялхуçалăхĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлемен пулсан, Хĕрлĕ Çар ӳсĕмсем тума пултарайман пулĕччĕ. Совет халăхĕ вăрçăн йывăр условийĕсенче хăйĕн çарне мĕн кирлине йăлтах парса тăма пултарчĕ тата унăн вăрçă техникине ывăнма пĕлмесĕр лайăхлатса пычĕ. Вăрçă пынă пĕтĕм вăхăтра тăшман хĕçпăшалсен пахалăхĕ енĕпе пирĕн çартан мала иртме пултараймарĕ. Çав вăхăтрах пирĕн промышленность фронта ытларах та ытларах вăрçă техники парса тăчĕ.

Иртнĕ çул вăрçă ĕçĕсенче кăна мар, тата пирĕн тылăн ĕçĕнче те улшăну çулталăкĕ пулчĕ. Пирĕн умра текех предприятисене Хĕвелтухăçне куçарса каяс тата промышленноçа хĕçпăшалсем тума урăхлатса йĕркелес задачăсем тăман. Совет государствин халĕ ĕнтĕ лайăх йĕркеленĕ тата хăвăрт ӳссе пыракан çар хуçалăхĕ пур. Апла пулсан, халăхăн пĕтĕм вăйне производствăна ӳстерес тата хĕçпăшалсене, уйрăмах танксене, самолетсене, тупăсене, хăй тĕллĕн çӳрекен артиллерие малалла лайăхлатса пырас ĕçе яма май пулнă. Ку ĕçре эпир пысăк ӳсĕмсем турăмăр. Хĕрлĕ Çар, пĕтĕм халăх пулăшни çине таянса, çапăçура кирлĕ снаряжение пĕр чăрмавсăр илсе тăчĕ, тăшман çине миллионĕ-миллионĕпе бомбăсем, минăсемпе снарядсем тăкрĕ, çапăçăва пиншер танксемпе самолетсене кĕрте-кĕрте ячĕ. Çирĕппĕнех çапла калама пулать: совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте халăх нихăçан пулман паттăр ĕç тунине кăтартса историе кĕрсе юлать. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Совет Союзĕнчи рабочисем, мирлĕ строительство çулĕсенче вăйлă та хăватлă социализмлă промышленность туса хунăскерсем, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фронта пулăшас тĕлĕшпе вĕресе тăракан хĕрӳллĕ ĕçе сарса ячĕç, ĕçре чăн-чăн паттăрлăх кăтартрĕç.

Эсир пĕлетĕр, ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçăра гитлеровецсем Германин вăйлă аталаннă промышленноçĕпе кăна мар, тата васальнăй çĕршывсемпе оккупациленĕ çĕршывсен чылай хăватлă промышленноçĕпе те усă курнă. Апла пулин те, Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçă пуçламăшĕнче вăрçă техники енĕпе хăйсем вăйлăрах пулнине гитлеровецсем сыхласа хăварма пултараймарĕç. Халĕ ĕнтĕ танксен, минометсен, автоматсен хисепĕ енĕпе тăшман малта тăнине пĕтерсе хунă пулсан, пирĕн çар халĕ хĕçпăшалсем, боеприпассем, снаряжени енĕпе пысăк çитменлĕхсемех туймасть пулсан, çакăнта вара пуринчен малтан ПИРĔН РАБОЧИ КЛАСĂН тава тивĕçлĕ ĕçне палăртмалла. (НУМАЙЧЧЕН ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Совет Союзĕнчи хресченсем, кая юлнă ялхуçалăхне мирлĕ строительство çулĕсенче колхоз стройĕ çине таянса малта пыракан ялхуçалăхĕ туса хунăскерсем, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хăйсем пĕтĕм халăх интересĕсене тарăн ăнланса тăнине ял историйĕнче нихăçан пулман пек кăтартса пачĕç. Вĕсем, фронта пулăшассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлесе, нимĕçсене хирĕç пыракан хальхи вăрçа совет хресченĕсем хăйсен тăван ĕçĕ, хăйсен пурнăçĕпе ирĕклĕхĕшĕн пыракан вăрçă тесе шутланине кăтартса пачĕç.

Паллă ĕнтĕ, фашистсен кĕтӳвĕсем тапăнса килнине пула, пирĕн çĕршыв вăхăтлăха Украинăн, Донăн тата Кубанĕн питех те кирлĕ ялхуçалăх районĕсемсĕр тăрса юлчĕ. Апла пулин те, пирĕн колхозсемпе совхозсем çарпа çĕршыва апат-çимĕç пысăк чăрмавсемсĕрех парса тăчĕç. Паллах, колхоз стройĕ пулман пулсан, колхозниксемпе колхозницăсем вăя шеллемесĕр ĕçлемен пулсан, эпир çак питех те йывăр задачăна татса парайман пулаттăмăр. Вăрçăн виççĕмĕш çулĕнче пирĕн çар апат-çимĕç çитменнине туймасть пулсан, халăха апат-çимĕç, промышленноçа вара чĕртавар парса тăрассĕ пулсан, çакăнта вара колхоз стройĕн вăйĕпе хăвачĕ, КОЛХОЗЛА ХРЕСЧЕНСЕН патриотизмĕ палăрчĕ. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Фронта пулăшас ĕçре пирĕн транспорт, чăн малтан пĕтĕм чугун çул транспорчĕ, çавăн пекех тата шыв çулĕпе тинĕс çулĕ тата автомобиль транспорчĕсем пысăк вырăн йышăнчĕç. Паллă ĕнтĕ, транспорт тылпа фронт хушшинчи çыхăнăвăн чи кирлĕ хатĕрĕ пулса тăрать. Хĕçпăшалсемпе огнеприпассем нумай туса хатĕрлеме пулать, анчах вĕсене транспортпа усă курса фронта вăхăтра çитермесен, вĕсем фронт ĕçĕшĕн усăсăр груз кăна пулса юлма пултарассĕ. Тӳрех каламалла: фронта хĕçпăшалсемпе огнеприпассем, апат-çимĕçсемпе тумтирсем тата ыттисем те вăхăтра турттарса пырас ĕçре транспорт татса паракан вырăн йышăнса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене тата топливо çитсе пыманнине пăхмасăрах, эпир фронта мĕн кирлине пурне те парса тăма пултартăмăр пулсан, кунта чи малтан пирĕн ТРАНСПОРТРИ РАБОЧИСЕМПЕ СЛУЖАЩИСЕМ тава тивĕçлĕ ĕçленине йышăнмалла. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Фронта пулăшас ĕçре интеллигенци те рабочи класпа хресченсенчен юлмасть. Совет интеллигенцийĕ пирĕн çĕршывăн оборонишĕн чĕререн парăнса ĕçлет, Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалне, производствăн техникипе организацине пĕрмаях лайăхлатса пырать. Вăл промышленноçпа ялхуçалăхне çĕклес ĕçре рабочисемпе колхозниксене пулăшать, вăрçă условийĕсенче совет наукипе культурине малалла ӳстерсе пырать.

Çакă вăл ПИРĔН ИНТЕЛЛИГЕНЦИЕ чыс кӳрет. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Совет Союзĕнчи пур халăхсем те хамăрăн Тăван çĕршыва хӳтĕлеме пĕр шухăш-кăмăллă пулса çĕкленчĕç, вĕсем хальхи отечественнăй вăрçă, кам мĕнле наци пулнине тата мĕнле тĕн тытнине пăхмасăрах, пĕтĕм ĕçсыннисен пĕр ĕçĕ пулса тăрать тесе, тĕрĕс шутлаççĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинче хирĕçӳсем пуçланса каясси ĕмĕтленни мĕн тери ухмахла шанчăксăр пулнине гитлерла политиксем халĕ ĕнтĕ хăйсем те кураççĕ. ПИРĔН ÇĔРШЫВРИ ХАЛĂХСЕН ТУСЛĂХĔ вăрçăри пур йывăрлăхсемпе испытанисене те тӳссе иртерчĕ, мĕнпур совет çыннисен фашистла захватчиксене хирĕç пыракан пĕрлехи кĕрешĕвĕнче татах та ытларах писĕхсе çирĕпленчĕ.

Çакăнта ĕнтĕ Совет Союз вăйĕн çăлкуçĕ. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Совет халăхне ертсе тата çул кăтартса пыракан вăй, мирлĕ строительство çулĕсенчи пекех, вăрçă кунĕсенче те Ленин партийĕ, большевиксен партийĕ пулса тăрать. Пирĕн большевиксен партийĕнни пек урăх нимĕнле партин те халăх хушшинче çавăн пек авторитет çук. Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци хăйсем валли ирĕклĕх çĕнтерсе илчĕç, социализмлă общество туса хучĕç. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче парти пирĕн умма фашистла захватчиксене хирĕç пĕтĕм халăх кĕрешĕвне хавхалантарса тата организацилесе пыраканни пулса тухса тăчĕ. Партин организаторла ĕçĕ совет çыннисен мĕнпур вăйне пĕр çĕре пĕтĕçтерсе, пĕр тĕллев патнелле ячĕ, хамăрăн мĕнпур вăйсемпе майсене тăшмана çапса аркатас ĕçе пăхăнтарчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче парти халăхпа татах та ытларах тăванланчĕ, ĕççыннисен анлă массисемпе татах та таччăнрах çыхăнчĕ.

Çакăнта ĕнтĕ пирĕн государство вăйĕн çăлкуçĕ. (НУМАЙЧЧЕН ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Хальхи вăрçă Ленинăн паллă кăтартăвне — вăрçă кашни халăхăн мĕнпур материальнăй тата духовнăй вăйĕсене пур енчен те тĕрĕслесе тухни пулса тăрать тесе кăтартса панине пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе пачĕ. Вăрçăсен историйĕ çакна вĕрентет: хуçалăх аталанăвĕпе организацийĕ тĕлĕшĕнчен, хăйĕн çарĕсен опычĕпе ăсталăхĕ тата çапăçури вăй-хăвачĕ тĕлĕшĕнчен, вăрçă пынă мĕнпур тапхăрта халăх мĕн чухлĕ тӳсĕмлĕ те пĕрлĕхлĕ пулни тĕлĕшĕнчен хăйĕн тăшманĕнчен вăйлăрах пулакан государство кăна çав тĕрĕслеве тӳссе иртерме пултарать. Пирĕн государство çавăн пек государство пулса тăрать те ĕнтĕ.

Совет государстви нихăçан та хальхин пек, Отечественнăй вăрçăн виççĕмĕш çулĕнчи пек, иксĕлми çирĕп пулман. Вăрçă урокĕсем çакăн çинчен калаççĕ: совет стройĕ çĕршыва мирлĕ строительство çулĕсенче экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çĕклес ĕçе организацилемелли чи лайăх форма кăна мар, вăрçă вăхăтĕнче тăшмана хирĕç тăма халăхăн мĕнпур вăйĕсене мобилизацилемелли чи лайăх форма та пулса тăчĕ. 26 çул каярах туса хунă совет влаçĕ историллĕ кĕске срокра пирĕн çĕршыва никам аркатайми крепость туса хучĕ. Хĕрлĕ Çарăн тĕнчери çарсенчен пуринчен те чи çирĕпрех те шанчăкларах тыл пур.

Çакăнта ĕнтĕ Совет Союз вăйĕсен çăлкуçĕ. (НУМАЙЧЧЕН ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Иккĕленмелли çук, Совет государстви вăрçăран вăйлă та тата тĕреклĕрех пулса тухĕ. Нимĕç захватчикĕсем, пирĕн государствăн хăватне хавшатма тăрăшса, пирĕн çĕрсене çаратаççĕ, тустараççĕ. Хĕрлĕ Çар туса пыракан наступлени гитлерла çарăн варварла, бандитла характерне ĕлĕкхинчен те ытларах кăтартса пачĕ. Нимĕçсем хăйсем тытса илнĕ районсенче пирĕн мирлĕ çынсене темиçе çĕр пин çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕç ирсĕрĕсем, вăтам ĕмĕрхи варварсем пек е Атилла йыткĕтĕвĕсем пек, ялсемпе хуласене çунтараççĕ, промышленность предприятийĕсемпе культура учрежденийĕсене çĕмĕреççĕ. Нимĕçсем çавăн пек усал ĕçсем туни фашистла захватчиксем вăйсăррине кăтартать, мĕншĕн тесен вăхăтлăха килнĕ çынсем çеç, хăйсем çĕнтернине хăйсем те ĕненмен çынсем çеç çавăн пек тăваççĕ. Гитлеровецсен ĕçĕ мĕн чухлĕ шанчăксăрланса пырать, çавăн чухлĕ вĕсем ытларах иртĕнсе тискер ĕçсем тăваççĕ, çаратаççĕ. Пирĕн халăх нимĕç ирсĕрĕсен çав преступленийĕсене каçармĕ. Эпир нимĕç преступникĕсене хăйсен мĕнпур тискер ĕçĕсемшĕн ответ тыттарăпăр! (НУМАЙЧЧЕН ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Фашистла çаратуçăсем вăхăтлăха хуçаланнă районсенче пирĕн ишĕлнĕ хуласемпе ялсене, промышленноçа, ялхуçалăхне, культура учрежденийĕсене çĕнĕрен ура çине тăратмалла пулать, фашистла чуралăхран хăтарнă совет çыннисем валли яланхи пек лайăх пурнăç условийĕсем туса памалла пулать. Тăшмантан хăтарнă районсенче хуçалăхпа культурăна çĕнĕрен ура çине тăратас ĕç халех те ĕнтĕ вăйлăн сарăлса кайнă. Анчах та ку вăл пуçламĕшĕ кăна-ха. Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенче нимĕçсем хуçаланнин йĕрĕсене пирĕн пĕтĕмĕшпех пĕтерсе хумалла. Ку вăл пысăк задача, пĕтĕм халăх тумалли задача. Çак задачăна эпир кĕске срокра тума пултаратпăр та, тумалла та.

3. Гитлера хирĕçле коалици тĕреклени. Фашистла блок аркани

Иртнĕ çулталăк Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçинче кăна мар, пĕтĕм тĕнчери вăрçăра та улшăнусен çулталăкĕ пулса тăчĕ.

Вăрçă тĕлĕшпе тата тулашри политика енĕпе çак çулта пулса иртнĕ улшăнусем ССР Союзне тата унпа туслă пурăнакан Союзлă çĕршывсене усăллăн, Германие тата вăрă-хурахла ĕçсем тунă çĕрте унпа пĕр каварлă Европăри çĕршывсене сиенлĕн пулса иртрĕç.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсен результачĕсем Совет Союзĕпе Германи фрончĕн тулашне чылай инçене сарăлчĕç, тĕнчери вăрçăн малашнехи пĕтĕм юхăмне улăштарчĕç тата пĕтĕм тĕнчере пысăк вырăн йышăнса тăма тытăнчĕç. Союзлă çĕршывсем пĕтĕмĕшлĕ тăшмана çĕнтересси сывхарчĕ, союзниксем хушшинчи çыхăнусем вара, вĕсен çарĕсен кĕрешӳри туслăхĕ, тăшман кĕтнĕ пек, вăйсăрланмарĕç кăна мар, пачах урăхла, вăйланса тĕреклечĕç. Çакăн çинчен Совет Союзĕпе Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсен Мускаври конференцийĕн историллĕ решенийĕсем те, нумаях пулмасть пичетлесе кăларнăскерсем, яр-уççăн калаççĕ. Халĕ пирĕн пĕрлешнĕ çĕршывсем тăшмана пĕрле пырса çапма çирĕппĕнех ĕмĕтленсе тăраççĕ, вĕсем пырса çапни тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕнтересси патне илсе пырĕ.

Çак çулта пирĕн союзниксем Çурçĕр Африкăра, Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче тата Кăнтăр Италире çапăçса пырса, нимĕçсен фашистла çарĕсене çапса çĕмĕрме Хĕрлĕ Çара пулăшрĕç. Кунпа пĕрлех союзниксем Германин промышленноçлă пысăк центрĕсене чылаях вăйлăн тапăнатапăна бомбăсем пăрахрĕç тата халĕ те пăрахаççĕ, çапла майпа тăшманăн вăрçăри хăватне чылай вăйсăрлатаççĕ. Çаксем çумне тата союзниксем пире тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе чĕртавар тăтăшах парса тăнине хушсан, ытлашши ӳстермесĕрех çапла калама пулать: çак мĕнпур ĕçсемпе вĕсем пирĕн çуллахи кампанин ăнăçлăхĕсене чылай çăмăллатрĕç. Паллах, союзлă çарсен Европа кăнтăрĕнчи хальхи ĕçĕсене иккĕмĕш фронт вырăнне хурса хаклама çук-ха. Анчах çакă вăл çапах та иккĕмĕш фронт евĕрлĕскер. Ăнланмалла ĕнтĕ, Европăра чăн-чăн иккĕмĕш фронта уçни, — ăна уçас вăхăт инçе мар, — гитлерла Германие çĕнтерессине чылай хăвăртлатать тата Союзлă государствăсен кĕрешӳри туслăхне татах та çирĕплетет.

Çапла ĕнтĕ, иртнĕ çулти ĕçсем çакна кăтартса пăраççĕ: Гитлера хирĕçле коалици халăхсен çирĕп пĕрлешĕвĕ пулса тăрать тата вăл çирĕп никĕс çинче никĕсленсе тăрать.

Халĕ ĕнтĕ пуриншĕн те паллă: гитлерла ушкăн, хальхи вăрçа пуçласа ярса, Германие тата унăн хӳрешкисене хăтăлса тухма çук лачакана кĕртсе ячĕ. Фашистла çарсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче пораженисем тӳсни тата пирĕн союзниксем итальянецсемпе нимĕçсен çарĕсене пыра-пыра çапни фашистла блокăн пĕтĕм çуртне кисрентерчĕ, çав çурт халĕ ĕнтĕ пирĕн куç умĕнчех арканса пырать.

Итали гитлерла коалицирен тухса ӳкрĕ, ăна каялла тавăрма çук ĕнтĕ. Муссолини нимĕнле улшăну та тума пултараймасть, мĕншĕн тесен вăл чăннипе нимĕçсене тыткăна лекнĕ çын пулса тăрать. Черетре коалицин ытти участникĕсем тăраççĕ. Финляндия, Венгрия, Румыния тата Гитлерăн ытти вассалĕсем, Германи вăрçăра поражени тӳснине курса хăраса ӳкнĕскерсем, халĕ ĕнтĕ вăрçă вĕсемшĕн усăллăн вĕçленессине пачах та шанмаççĕ тата Гитлер туртса кĕртнĕ лачакаран мĕнле те пулсан çăлăнса тухас тесе шухăшлаççĕ. Çаратас тĕлĕшпе гитлерла Германипе пĕр каварлисем, нумаях та пулмасть хăйсен хуçипе пĕр сăмахсăр пăхăнса тăнăскерсем, халĕ, вăрă-хурахла ĕçсемшĕн ответ тытмалли вăхăт килсе çитсен, тĕмсем çинелле пăхаççĕ, вăрă-хурахла шайкăран никам сисиччен тухса шăвăнас тесе меллĕ самант кĕтеççĕ. (КУЛАÇÇĔ).

Вăрçа пуçласа, гитлерла блокăн участникĕсем хăвăрт çĕнтерессе шаннă. Вĕсем малтанах ĕнтĕ кама мĕн лекмеллине валеçсе хунă: кама кукăлĕ, кама хăлха чикки. (КУЛАÇÇĔ, АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Паллах, вĕсем хăлха чиккине хăйсен противникĕсем валли палăртнă, хăйсене вара — кукăль палăртнă. Анчах халĕ ĕнтĕ Германипе унăн тарçисене кукăль лекес çукки паллă, халĕ вĕсен хăйсем хушшинче хăлха чиккине валеçсе илмелле пулать. (КУЛАÇÇĔ, АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Ĕç çавăн пек ăнăçсăр пĕтессине кура, Гитлерпа пĕр каварлисем халĕ ĕнтĕ хăлха чикки мĕнле те пулин сахалтарах лектĕр тесе тăрăшса, вăрçăран тухасси çинчен шухăшласа пуçĕсене çĕмĕреççĕ. (КУЛАÇÇĔ).

Итали примерĕ Гитлерăн вассалĕсене çакна кăтартса парать: вĕсем нимĕçсенчен пурпĕрех уйăрăлассине мĕн чухлĕ каярах хăвараççĕ тата нимĕçсене хăйсен государствисенче хуçаланма мĕн чухлĕ ирĕк ытларах параççĕ, вĕсен çĕршывĕсем çавăн чухлĕ ытларах çаралса юлаççĕ, вĕсен халăхĕсене çавăн чухлĕ ытларах хĕн-хур тӳсме лекет. Итали примерĕ çавăн пекех тата çакна кăтартса парать: гитлерла Германи хăйĕн васальнăй çĕршывĕсене хӳтĕлеме пачах та шутламасть, вĕсене вăл, хăйне çапса аркатас сехете мĕнле те пулин каярах хăварас тесе, пĕтĕмпех çаратса хăваракан вăрçă валли вырăн туса хума ĕмĕтленет.

Нимĕç фашизмĕн ĕçĕ путланса ларчĕ, вăл туса хунă юнлă «çĕнĕ йĕрке» арканса каясси патнелле пырать. Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче фашистла пусмăрçăсене хирĕç пĕтĕм халăх тарăхăвĕ ӳссе пырать. Германин халиччехи чапĕ ункала союзлă çĕршывсенче тата нейтральнăй çĕршывсенче ĕмĕрлĕхех пĕтсе ларчĕ, вăл нейтральнăй государствăсемпе тытакан экономикăллă тата политикăллă çыхăнусем хавшаса çитрĕç.

Гитлерла ушкăн нимĕçсем тĕнчере пуç пулса тăрасси çинчен кăсăхса кайса шăрпанă вăхăт тахçанах иртсе кайнă ĕнтĕ. Халĕ ĕнтĕ паллă, нимĕçсем тĕнчене пуç пулса тăрасси çинчен мар, мĕнле те пулин пуçĕсене сыхласа хăварасси çинчен шухăшлаççĕ. (КУЛАÇÇĔ, АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Çапла ĕнтĕ, вăрçă çакна кăтартса пачĕ: фашистла государствăсен союзĕн çирĕп никĕс пулман, çукка та. Гитлерла коалици унта хутшăнакансен захватчикла, вăрă-хурахла ĕмĕчĕсен никĕсĕ çинче пулса тăнă. Гитлеровецсем вăрçăра çитĕнӳсем тунă чухне, фашистла коалици çирĕп пĕрлешӳ пек курăннă. Анчах фашистла çарсем тӳснĕ малтанхи пораженисемех, тĕрĕссипе, вăрă-хурахла блока арканса каясси патне илсе çитерчĕç.

Гитлерла Германипе унăн вассалĕсем катастрофа тӳсесси умĕнче тăраççĕ.

Союзлă çĕршывсем гитлерла Германие çĕнтересси Европăри халăхсен государствăллă, экономикăллă тата культурăллă пурнăçне пĕтĕçтерсе организацилес тĕлĕшпе питех те кирлĕ ыйтусем кăларса тăратать. Пирĕн правительствăн политики çав ыйтусем тĕлĕшпе улшăнмасăрах юлать. Эпир хамăрăн союзниксемпе пĕрле çаксене тума тивĕçлĕ пулатпăр:

1) Европăри халăхсене фашистла захватчиксенчен ирĕке кăлармалла тата вĕсене хăйсен нацилле государствисене, фашистла пусмăрçăсем вакласа пĕтернĕскерсене, пĕрлештерсе пĕтĕçтерес ĕçре пулăшмалла, — Франци, Бельги, Югослави, Чехословаки, Польша, Греци тата ытти государствăсен халăхĕсем, халĕ нимĕç пусмăрлăхĕ айĕнче асапланаканскерсем, çĕнĕрен ирĕклĕ те хăйсем тĕллĕн пурăнакан халăхсем пулса тăма тивĕçлĕ;

2) Европăри ирĕке тухакан халăхсене хăйсен государство йĕркине тăвас тĕлĕшпе ыйтăва хăйсем тĕллĕн татса пама тулли правăпа ирĕк памалла;

3) мĕнпур фашистла преступниксене, хальхи вăрçăшăн тата халăхсен асапĕсемшĕн айăплă пулса тăраканскерсене, вĕсем кирек мĕнле çĕршыва тарса пытансан та, хăйсен тискер ĕçĕсемшĕн хаяр ответ тыттармалла тăвас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла;

4) Европăра Германие çĕнĕ агресси тума нимĕнле те май паман йĕрке туса хумалла;

5) Европăри халăхсем хушшинче пĕр-пĕрине шанса тăнă никĕс çинче тата нимĕçсем аркатса пĕтернĕ хуçалăхпа культурăна юсас шутпа пĕр-пĕрне пулăшас никĕс çинче экономикăпа политика тата культура тĕлĕшпе пĕрле ĕçлессине нумай вăхăтлăха йĕркелемелле.

* * *

Хĕрлĕ Сарпа совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре иртнĕ çулталăк хушшинче пысăк çитĕнӳсем турĕç. Эпир вăрçă ĕçĕсене тĕпренех хамăр çĕршыв майлă улăштартăмăр, вăрçă халĕ ĕнтĕ татăклăн вĕçленесси патне пырать. Анчах совет çыннисем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма, хăйсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанма вĕренмен. Лăпланса ларма тытăнсан, çĕнтерĕве алăран вĕçертме пулать. Çапăçмасăр, вăй хумасăр çĕнтерме çук. Çĕнтерĕве ăна çапăçса туяççĕ. Çĕнтерӳ çывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла çавăрса илес тесен, çĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне хăй шеллемесĕр ĕçлени, фронтра Хĕрлĕ Çар пĕлсе тата татăклăн кĕрешни кирлĕ. Эпир тăшмана аркатса тăкас вăхăта çывхартмалли мĕнпур майсемпе усă курманни хамăр Тăван çĕршыв умĕнче, фашистла чуралăха вăхăтлăха кĕрсе ӳкнĕ совет çыннисем умĕнче, нимĕç чуралăхĕнче асапланса пурăнакан Европа халăхĕсем умĕнче преступлени туни пулнă пулĕччĕ. Тăшмана сывлăш çавăрса илме памалла мар. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн тăшмана тĕппипех çĕнтермешкĕн хамăрăн пĕтĕм вăя хумалла.

Совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар малашнехи кĕрешĕвĕн йывăрлăхĕсене лайăх курса тăраççĕ. Анчах та халĕ ĕнтĕ эпир çĕнтерес кун çывхарса килни паллă. Вăрçă халь çакăн пек тапхăра кĕчĕ: халĕ ыйту оккупантсене совет çĕрĕ çинчен пĕтĕмĕшпех хăваласа ярасси тата фашистла «Европăри çĕнĕ йĕркене» пĕтерсе ларасси çинчен пырать. Эпир Украинăпа Белоруссие, Ленинградпа Калинин облаçĕсене тăшманран тасатса çитерес вăхăт, Крымри, Литвари, Латвири, Эстонири, Молдавири тата Карело-Финн республикинчи халăхсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларас вăхăт инçе мар ĕнтĕ.

Юлташсем!

Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн боевой союзĕ çĕнтерессишĕн! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Европăри халăхсене фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларассишĕн! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Нимĕç ирсĕрĕсене пирĕн çĕр çинчен пĕтĕмĕшпех хăваласа ярассишĕн! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çар! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пултăр пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пулччăр пирĕн хăюллă партизансемпе партизанкăсем! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв! (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм! (НУМАЙЧЧЕН ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ. ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇĔ. ПĔТĔМ ЗАЛ ОВАЦИ ТĂВАТЬ)

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАЗНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

инженерла батальонĕ, КЕРФ полковникăн 1-мĕш гвардейски тупăллă артиллери бригади, ЖАГАЛО полковникăн 3-мĕш гвардейски çăмăл артиллери бригади, ПАВЛОВ майорăн 65-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, ТИХОНОВ подполковникăн 98-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, НАЗАРЕНКО подполковникăн 1157-мĕш тупăллă артиллери полкĕ, МАЗАНОВ майорăн 497-мĕш минометнăй полкĕ, СКОРНЯКОВ майорăн 59-мĕш уйрăм танковăй полкĕ, УГРЮМОВ полковникăн 150-мĕш уйрăм танковăй бригади.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КИЕВ хулине ирĕке кăларасшăн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене „КИЕВСКИ“ тесе ят парас.

Çав соединенисемпе чаçсене малашне çапла чĕнмелле тăвас:

167-мĕш икĕ хут Хĕрлĕ ялавлă Сумски-Киевски стрелковăй дивизи,
232-мĕш Сумски-Киевски стрелковăй дивизи,
340-мĕш Сумски-Киевски стрелковăй дивизи,
163-мĕш Ромненски-Киевски стрелковăй дивизи,
240-мĕш Киевски стрелковăй дивизи,
136-мĕш Киевски стрелковăй дивизи,
180-мĕш Киевски стрелковăй дивизи,
74-мĕш Киевски стрелковăй дивизи,
23-мĕш Киевски стрелковăй дивизи,
30-мĕш Киевски стрелковăй дивизи,
218-мĕш Киевски стрелковăй дивизи,
121-мĕш Рыльски-Киевски стрелковăй дивизи,
141-мĕш Киевски стрелковăй дивизи,
226-мĕш Глуховски-Киевски стрелковăй дивизи,
5-мĕш гвардейски Сталинградски-Киевски танковăй корпус,
6-мĕш гвардейски Киевски танковăй корпус,
7-мĕш гвардейски Киевски танковăй корпус,
291-мĕш Воронежски-Киевски штурмовой авиаци дивизийĕ,
4-мĕш гвардейски Киевски штурмовой авиаци дивизийĕ,
264-мĕш Киевски штурмовой авиаци дивизийĕ,
256-мĕш Киевски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
8-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Киевски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
208-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Киевски çывăха вĕçекен каçхи бомбардировочнăй авиаци дивизийĕ,
17-мĕш Киевски артиллери дивизийĕ,
13-мĕш Киевски артиллери дивизийĕ,
3-мĕш гвардейски Киевски минометнăй дивизи,
112-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Киевски тупăллă артиллери полкĕ,
805-мĕш Киевски гаубицăллă артиллери полкĕ,
819-мĕш Киевски гаубицăллă артиллери полкĕ,
12-мĕш Киевски уйрăм минометнăй бригада,
9-мĕш гвардейски Киевски истребительнăй противотанковăй бригада,
491-мĕш Киевски минометнăй полк,
492-мĕш Киевски минометнăй полк,
222-мĕш Киевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
316-мĕш гвардейски Киевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
868-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Киевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
1 666-мĕш Киевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
1 075-мĕш Киевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
4-мĕш гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Киевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
24-мĕш гвардейски Киевски тупăллă артиллери бригади,
60-мĕш Киевски корректировка тăвакан уйрăм авиаци эскадрильи,
811-мĕш Киевски разведка тăвакан уйрăм артиллери дивизионĕ,
8-мĕш Киевски çўлелле перекен артиллери дивизийĕ,
21-мĕш Киевски çўлелле перекен артиллери дивизийĕ,
268-мĕш Киевски уйрăм инженерла батальон,
7-мĕш Киевски уйрăм инженерла батальон,
1 505-мĕш Киевски уйрăм инженерла батальон,
1-мĕш гвардейски Киевски тупăллă артиллери бригади,
3-мĕш гвардейски Киевски çăмăл артиллери бригади,
65-мĕш гвардейски Киевски минометнăй полк,
98-мĕш гвардейски Киевски минометнăй полк,
1 157-мĕш Киевски тупăллă артиллери полкĕ,
497-мĕш Киевски минометнăй полк,
59-мĕш Киевски уйрăм танковăй полк,
150-мĕш Киевски уйрăм танковăй бригада.

202-мĕш Средне-Донской бомбардировочнăй авиаци дивизине, 10-мĕш гвардейски Сталинградски истребительнăй авиаци дивизине тата 235-мĕш Сталинградски истребительнăй авиаци дивизине, нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса иккĕмĕш хут чапа тухнăскерсене, Хĕрлĕ ялав орденĕсемпе наградăлама тăратас.

Чехословаксен СССР-ти 1-мĕш уйрăм бригадине, КИЕВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнăскерне, 2-мĕш СТЕПЕНЬ СУВОРОВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, ноябрĕн 6-мĕшĕнче, 17 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ КИЕВ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене виççĕр çирĕм тăвата тупăран çирĕм тăвата хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, КИЕВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешўре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕ.

Сталин юлташăн доклачĕпе приказне чăваш ĕççыннийĕсем хаваслăн кĕтсе илчĕç

Çулпуç докладне итленĕ хыççăн

Совет ĕççыннисем Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнине тулли кăмăлпа савăнса уявлаççĕ. Предприятисемпе учрежденисенче ĕç пĕтес умĕн радио савăнăçлă хыпар илсе килчĕ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар Украина столицине—Киев хулине ирĕке кăларнă. Ку хыпар ĕççыннисем хушшинче çиçĕмле хăвăртлăхпа сарăлчĕ.

Каçхине предприятисемпе учрежденисенче рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем Сталин юлташăн докладне итлерĕç. Çулпуç доклачĕ ĕççыннисене фронта пулăшассишĕн хастарлăнрах кĕрешме çĕнĕ вăй-хăват хушса пачĕ.

Шупашкарти макарон фабрикинчи работниксем, Сталин юлташ докладне итлесен, малашне татах та тимлĕнрех ĕçлеме пулчĕç.

Пирĕн фабрика октябрьти плана 124 процент тултарчĕ, — терĕ смена мастерĕ Н. Титова юлташ.—Докладa итленĕ хыççăн, манăн чĕре малашне тата лайăхрах ĕçлес ĕмĕтсемпе тулчĕ. Эпĕ хамăн ĕмĕтсене пурнăçа кĕртетĕп. Сталин юлташăн докладне çĕнĕ çитĕнўсем тунипе ответлетĕп.

Рабочисемпе служащисем пурте фронта пулăшассишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеме сăмах параççĕ.

Столицăри ытти предприятисемпе артельсен коллективĕсем те Сталин юлташ докладне пысăк хаваслăхпа итлерĕç. Вĕсем çĕнтерўшĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме хатĕр пулни çинчен пĕлтереççĕ.

Çĕнтерўшĕн нимĕн те шеллеместпĕр

КОЛЬЦОВКА, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Диктор питех те кирлĕ хыпар пĕлтересси çинчен асăрхаттарнă хыççăнах репродукторсем умне колхозниксем пухăна-пухăна тăчĕç. Мĕнле хыпар пĕлтерессине никам та пĕлмест, апла пулин те кашниех Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ çинчен шутлать. Чăнах та, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарăн темиçе хутчен те чапа тухнă дивизийĕсем паян Советлă Украинăн столицине—Киева нимĕçсен пусмăрĕнчен хăтарнă. Ку хыпар часах кашни колхозник килне саланчĕ.

Совет войскисем Киев хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларни Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă ятпа чи чаплă парне пулчĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем приказа итленĕ хыççăн та киле саланмарĕç. Вĕсем ĕççынни депутачĕсен Мускав хула совечĕн чаплă ларăвĕнче Сталин юлташ тунă доклада радио тăрăх парасса кĕтрĕç. Тăван çулпуçăн хĕрўллĕ сăмахĕсене Кольцовка çыннисем тимлĕн итлерĕç. Тăван çулпуç пире, ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсене, нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕнтермелли майсене яр-уççăн кăтартса пачĕ.

Пирĕн Ленин орденлĕ колхоз членĕсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллăн, кĕске срокра туса пĕтерчĕç. Эпир государство умĕнчи парăмсене пурне те срокчен татрăмăр. Çитес çулшăн аванс шучĕпе 17 пин пăт тырă парса хутăмăр. 1944 çулхи обязательствăсен шучĕпе 66 центнер аш-какай патăмăр. Пирĕн колхозниксем тăван çĕршыв оборонин фондне 177 центнер тырă, 17 центнер какай хыврĕç. Çака вал эпир хамăрăн тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшса тăнине çирĕплетсе парать.

Анчах тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпе çĕнтермен-ха. Умра—хаяр та татăклă çапăçусем. Эпир хамăрăн мĕнпур вăя, пултарулăха, тавçарулăха тăшмана çĕнтерес сехете хăвăртрах çывхартма паратпăр. Сталин юлташăн Октябрь уявĕ умĕн тунă доклачĕ тата совет войскисем Киев хулине ирĕке кăларни çине ответлесе, пирĕн колхозниксем, пĕр кăмăллă пулса, çапла йышăнчĕç: çитес çул кăçалхинчен те тухăçлăрах тырпул туса илес шутпа, Сталинла Конституци кунĕ тĕлне хире 9.000 лав тислĕк кăлармалла; ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вăрлăхсене сортласа пĕтермелле; ноябрĕн 22-мĕшĕнчен кая юлмасăр ялхуçалăх машинисене юсаса лартмалла.

Кунсăр пусне эпир хамăр хуçалăхра перекетлесе усранă тырра оборона фондне хывма тытăнатпăр. Эпĕ хам 30 пăт тырă паратăп.

Тăван çулпуç пире социализмла ялхуçалăхĕнче çĕнĕ те пысăк çĕнтерўсем тума чĕнет. Колхозла ял фронта пĕтĕм вăйпа пулăшса тăрĕ.

А. ВАСЯНИН,
Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Колхозниксен савăнăçĕ

КАНАШ, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Паян районри пур колхозсенче те аслă Октябрь уявĕ ячĕпе чаплă ларусем пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсен нихăçанхинчен те пысăк савăнăç. Паттăр Хĕрлĕ Çар Украина столицине — Киев хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

Сухайкассинчи „3-мĕш Пятилетка“ колхозри ларура отечественнăй вăрçă инваличĕ И. Яснов юлташ çапла каларĕ:

— Тăшманăн пĕтес кунçулĕ çывхарнă çемĕн çывхарать. Ку чаплă çĕнтерў пире татах та хастарлăнрах ĕçлеме хушать, — терĕ.

Лару калама çук пысăк çĕкленўпе иртрĕ. Çавăн пекех „Мотор“, „Броневик“, „Коминтерн“ колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем те Киев хулине ирĕке кăларнă паттăр войскăсене хĕрўллĕн саламлаççĕ. Вĕсем фронта пĕтĕм вăйран пулăшса тăма çĕршыв умĕнче тупа турĕç.

И. Краснов.

Разведчик Александр Ямщиков

(Вăрçă хирĕнчен килнĕ çыру)

Пирĕн чаçра Чăваш республикинчен килнĕ комсомолец пур. Вăл — Александр Ямщиков, Шăмăршă районĕнчен, 19 çултаскер. Чаçра вăл хăюллă та паттăр разведчик шутланать.

Пирĕн çарсем, тăшманăн тĕреклетнĕ вырăнĕсене çĕмĕрсе, хăватлă наступлени туса пычĕç. Тăшман çав кун хăйĕн оборонин темиçе пунктне çухатрĕ. Ĕç ăнманнипе тарăхса, нимĕçсем пĕр кун хушшинче 8 хут контратака турĕç. Крючков капитанăн подразделенийĕ тăшман артиллерипе миномётсенчен питех те вăйлăн персе тăракан вырăна шăтарса кĕчĕ. Нимĕçсем ăна хупăрласа илме тапаçланса пăхрĕç.

Пирĕн боецсен çар хатĕрĕсем пĕтес патнех çитрĕç. Çак вăхăтра вăрман хĕрринче тăшман танкĕсем курăнчĕç. Вĕсем, куçса пынă май, пирĕн позицисене пеме тытăнчĕç. Çакăн çинчен васкаса хамăрăн артиллеристсене пĕлтермелле пулчĕ. Анчах... çыхăну татăлнă. Пирĕн малти линипе тыла çыхăнтарса тăракан çул çине тăшман пĕр вĕçĕмсĕр артиллерипе миномётсен вутне тăкса тăрать. Тăшманăн снайперĕсемпе автоматчикĕсем пирĕн пата резервсем илсе пырас ĕçе чăрмантарса тăраççĕ.

Çак питех те хăрушă вăхăтра чăваш çамрăкĕ, 19 çулти комсомолец, артиллерист Александр Ямщиков тата Ананьев рядовойпа Тимофеев сержант разведкăна кайма кăмăл тунни çинчен пĕлтерчĕç. Вĕсен тăшман çил-тăвăллăн персе тăракан вырăн витĕр каймалла. Хăюллă çамрăксем, вилĕме хирĕç куçа-куçăн пăхса, çĕр çуммипе йăпшăнаççĕ. Акă, Тимофеев сержанта фашистла ирсĕрсем персе ўкерчĕç. Анчах Ямщиков, çĕр çуммипе палăрмасăр шуса, çыхăну татăлнă вырăна çитрĕ. Вăл хăвăртрах телефон проводне сыпрĕ. Ун хыççăн артиллеристсем нимĕçсен контратака тăвакан пехотине тата тăшман танкĕсене лăплантарчĕç. Тăшман пысăк çухату тўссе, каялла чакрĕ.

Çак çапăçура Ямщиков темиçе хутчен те тăшманăн вутлă çумăрĕ айĕнче пулчĕ—разведкăна кая-кая килчĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ăна правительство наградине пама тăратнă.

Александр Ямщиков фронтра хăюллăн çапăçни çинчен унăн тăван ашшĕ-амăшĕ, тусĕсемпе тăванĕсем пĕлччĕр. Вĕсем унпа савăнччăр, ун патне хĕрўллĕ те хавхалантаракан çырусем çырччăр. Пирĕн адрес:

24020-мĕш полевая почта.

Лейтенант П. МИХАЙЛОВ,
Н-ски чаçăн комсоргĕ.

МУСКАВ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнине уявлама пухăннă Шупашкар хулинчи совет, парти тата обществăллă организацисен чаплă ларăвĕ Сире, Ленинăн шанчăклă вĕренекенне тата унăн ĕçне малалла туса пыракана, пирĕн çĕнтерўсене организацилесе хавхалантарса пыракана, генилле полководеца, большевикла хĕрўллĕ салам ярать.

Паян эпир ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ Сире, Сталин юлташ, пĕрремĕш степень Суворов орденĕпе наградăласси çинчен кăларнă Указа тулли кăмăлпа хавхаланса тата пысăк савăнăçпа кĕтсе илтĕмĕр.

Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнине совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар гитлеровецсен кĕтĕвĕсене пирĕн тăван çĕршывран тĕпĕ-йĕрĕпех хăваласа кăларассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешнĕ вăхăтра уявласа ирттереççĕ.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар çуллахи наступлени тапхăрĕнче темиçе çĕр хулана тата темиçе пин яла ирĕке кăларчĕ, тăшманран 350 пин тăваткăл километр ытларах тасатрĕ. Тăшмана Совет çĕрĕ çинчен массăллăн хăваласа кăларасси малалла пырать. Паян, ноябрĕн 6-мĕшĕнче, пирĕн войскăсем Советлă Украинăн пĕрремĕш столицине Киев хулине тытса илчĕç. Паттăр совет войскисем, тăшман питех те вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе, хăйсен чапа тухнă çапăçури ялавĕсене хĕвеланăçнелле йăтса пыраççĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене татăклăнах çĕнтерес хаваслă сехете çывхартаççĕ.

Пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм совет тылĕ нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкма паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшать. Рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци фронта хĕçпăшал, çар хатĕрĕсем, снаряжени тата апат-çимĕç парса тăрассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле чăваш ĕççыннийĕсем те фронта пулăшма пархатарлăн ĕçлеççĕ. Республикăри пысăк заводсем чылайĕшĕ уйăхран-уйăха хăйсен производствăллă заданийĕсене ирттерсе пурнăçлаççĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пĕрремĕш вырăна йышăнаççĕ. Республикăри колхозсемпе колхозниксем ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пирĕн республикăри колхозсем государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçа кĕртрĕç, аш-какай пĕтĕмĕшпех парса татрĕç. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри плана та срокчен тултарнă.

Эпир çакна яланах асра тытса тăратпăр: пирĕн çĕршыва фашистла оккупантсенчен пĕтĕмĕшпех тасатассишĕн тата тăшманран ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсаса ура çине тăратассишĕн пыракан кĕрешў малашне те совет халăхĕн мĕнпур вăйне хума ыйтать, активлăха ўстерме, организованно пулса тата пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хушать.

Сире, Сталин юлташ, çапла шантарса калатпăр: Чăваш республикинчи ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, малашне те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хатĕр тăраççĕ, тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкмашкăн тата ăна пирĕн çĕр çинчен хăваласа кăлармашкăн тăван Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине йăлтах парса тăма, ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсаса йĕркелемешкĕн пур енлĕ пулăшу пама хатĕр тăраççĕ.

Пирĕн çĕршывра империалистсен влаçне сирпĕтсе антарнă тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинче мир тăвасси çинчен пĕлтернĕ Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул тултарни сывă пултăр!

Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршыван ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ—нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешўре хавхалантарса тата организацилесе пыраканĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуçăмăр, генилле полководец Сталин юлташ!

Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул çитнĕ ятпа Шупашкарта пулса иртнĕ чаплă лару

Енер, ноябрĕн 6-мĕшĕнче, Шупашкарта Советсен Çуртĕн залĕнче Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул çитнĕ ятпа совет, парти тата обществăллă организацисен, хулари стахановецсемпе ударниксен, советлă интеллигенцин чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Президиумра — ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Чарыков, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Серов, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Белков, Андреев, Лисин, Иванов юлташсем, Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ Белолипецкий, Чăваш АССР государство хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ Щербаков, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Михайлов, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕсем Романова, Ислюков, Шупашкар хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташсем. Унтах Çар гарнизонĕн руководителĕсем, хулари чаплă стахановецсем.

Шăп 8 сехетре ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ чаплă ларăва уçни çинчен пĕлтерет.

Чăваш АССР Военкомачĕн Политотдел начальникĕ Тютиков юлташ сĕннипе, Хисеплĕ президиум суйлаççĕ.

— Совет государствин хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховный Главнокомандующийĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин!

Залра тăвăллăн алă çупни янăраса каять. Пурте, пĕр харăс тăрса, нумайччен алă çупса, çулпуçа хисеп тăваççĕ.

Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский юлташсен ячĕсене те хĕрўллĕн алă çупнипе кĕтсе илеççĕ.

Аникин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен доклад тума ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарьне Иванов юлташа сăмах парать. Иванов юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци пĕлтерĕшĕпе унăн тивлечĕ çинчен, социализмлă Тăван çĕршывăн 26 çулхи ĕçĕпе кĕрешĕвĕ çинчен, совет халăхĕпе мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç отечественнăй вăрçă туса пыни çинчен тата совет халăхĕн малашнехи задачисем çинчен тĕплĕн чарăнса тăрать. Доклада пурте пысăк тимлĕхпе итлеççĕ.

Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Евлампьев юлташ Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне ямалли çырăва вуласа парать. Лару участникĕсем Сталин юлташа чысласа тепĕр хут тăвăллăн алă çупаççĕ. «Сывă пултăр юратнă çулпуçăмăр, генилле полководец Сталин! ура!»—тесе кăшкăрни илтĕнет. Кашнийĕн чĕринче тулли хаваслăх — ик-виçĕ сехет каярах çеç вĕсем пирĕн войскăсем Советлă Украинăн столицине—Киев хулине ирĕке кăларнă хыпара пĕлчĕç. Кашнийĕн чĕринчех—тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпе çĕмĕрсе тăкас шанчăк çирĕп.

Çырăва йышăннă хыççăн чаплă лару хупăнчĕ. Лару хыççăн концерт пулчĕ.

Уяв ячĕпе тунă çитĕнўсем

Шупашкарти «Кожупряжь» артель коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура ĕç тухăçлăхне нумай ўстерчĕ. Кашни рабочипе работница хăйсем çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕç. Октябрь уйăхĕнчи производство программине артель 101,7 процент пурнăçларĕ. Уйрăм цехсене илсессĕн, хатĕрлў цехĕ 178 процент, çăматăсем йăвалакан цех 177 процент, ăтă-пушмаксем юсакан цех 160 процента çити пурнăçланă.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура А. Ефимова, А. Колпакова, Ваганова, Железнова тата ыттисем те лайăх ĕçленине палăртмалла.

Комсомолка А. Ефимова юлташ пĕччен виçĕ çын тумалли ĕçе туса пырать.

— Эпĕ ку артельре ĕнтĕ улттă çул ĕçлетĕп. Малтан техничка пулса ĕçленĕ, халĕ цех заведующийĕ пулса ĕçлетĕп. Ку манăн пурнăçра пысăк çитĕнў, тет вăл. Вăл малалла та ĕç тухăçлăхне хăпартса пыма пулчĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче ДНЕПР лиманĕпе ХУРА ТИНĔС çыранĕ хушшинчи районра пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, 30 яла тытса илнĕ, вĕсем хушшинче ЧУЛАКОВКА, ЧЕРНИГОВКА, РЫБАЛЬЧЕ, ИВАНОВКА, ОЧАГОВСКИЙ, КРАСНАЯ ЗНАМЕНКА, СВОБОДНАЯ УКРАИНА, ЧЕРНОМОРСКИЕ КОЛОДЦЫ, ОБЛОИ, СВОБОДНЫЙ ПОРТ, ПРОГНОИ, ПОКРОВКА, ПОКРОВСКИЕ ХУТОРА, ФОРШТАДТ ятлă пунктсем пур.

ДНЕПР кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем тăшман контратакисене сире-сире янă тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. КИЕВ районĕнче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, ДНЕПРАН сылтăм енчи плацдармсене сарасшăн вăйлăн çапăçнă. Малалла куçса ЛИТВИНОВКА, ТАРАСОВЩИНА, ГАВРИЛОВА, ВОРОНОВКА, РАКОВКА, СИНЯК, МОСТИЩЕ, БЕРКОВЕЦ, БЕЛИЧИ, СВЯТОШИНО, ПЕТРОПАВЛОВСКАЯ—БОРЩАГОВКА, ПРИОРКА ятлă вăйлă тĕреклетнĕ пунктсене тытса илнĕ тата КИЕВПА ЖИТОМИР хушшинчи шоссе çулне татса хунă.

НЕВЕЛЬТЕН хĕвеланăçнерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, темиçе ял йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тупăсемпе минометсенчен персе тăнă.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 49 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 23 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Днепр шывĕпе Хура тинĕс çыранĕ хушшинчи районра пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 30 ял ытла тытса илнĕ. Прогнои, Покровка, Покровские Хутора тата Дорштадт ятлă пунктсене тытса илнĕ хыççăн совет войскисем çурутравăн Днепр лиманĕнчен кăнтăртарахри пайне пĕтĕмĕшпех нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатнă. Пирĕн çамăллăн куçса пыракан чаçсем тăшманăн пĕр-перинчен уйрăм тăракан ушкăнĕсене пĕтерсе пынă. Фронтăн пĕр участокĕнче кăна пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсен 1.200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Питĕ нумай хĕçпăшал, горючи усракан пысăк склад, 500 лав, 1.500 лаша тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Киев районĕнче пирĕн çарсем Днепр шывĕн сылтăм енчи плацдарма сарасшăн çапăçнă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнине сире-сире ярса, пĕр чаçăн соединенийĕсем нимĕçсен оборонин икĕ тăрăхне пĕрин хыççăн теприне татса тухнă та вăйлăн тĕреклетнĕ темиçе яла тытса илнĕ. Тăшманăн пысăк вăйĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Малалла ăнăçлăн тапăнса пырса, пирĕн çарсем Святошина ятлă пысăк яла штурмласа йышăнса илнĕ, çапла вара Киевпа Житомир хушшинчи шоссене тата Киевпа Коростень хушшинчи чугун çула татса пăрахнă. Тăшман совет чаçĕсем малалла куçса пырассине чарса лартма пĕтĕм вăйне тăрăшать. Вăл, пехотăпа танксен резервĕсене илсе пырса, вĕсене çул çинчех çапăçăва кĕртсе ярать. Гитлеровецсен пур контратакисене те сире янă, вĕсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Тăшманăн 3.000 салтакĕпе офицерĕсене пĕтернĕ, 38 танкне, темĕн чухлĕ туппине тата автомашинисене нумай пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçăн соединенийĕсем хăйсем тĕллĕн çÿрекен 5 тупă, 40 хир туппи, 72 миномет (вĕсенчен улттăшĕ—улттă кĕпçеллисем), 140 пулемет, 9 пысăк склад тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Невельтен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр чаçăн соединенийĕсем, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçса, темиçе яла тытса илнĕ. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна яхăн, хăйсем тĕллĕн çÿрекен 3 тупă, 120 хир туппи пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокĕнче тăшман контратакисене тунă, анчах вĕсене пурне те, тăшмана пысăк çухатусем тÿстерсе, сире-сире пăрахнă. Пĕр чаçăн подразделенийĕсем ăнăçлă маневр туса, тăшмантан Ермошкино ятлă пункта тытса илнĕ. Хаяррăн çапăçнă хыççăн нимĕçсен гарнизонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă, 11 тупă, боеприпассен складне, апаласен 2 складне тата ытти трофейсене те тытса илнĕ.

* * *

Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 5 пин тонна таякан транспортне, хуралта çÿрекен карапне тата пĕр буксирне путарнă.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче Нарва заливĕнче тăшман пирĕн катерсене тральщиксемпе тапăннă. Тăшманăн 8 тральщикĕ пирĕн катерсене пенĕ. Пирĕн пырса çитнĕ торпеднăй катерсем нимĕçсен 5 тральщикне путарнă. Тăшманăн 2 тральщикне сиенленĕ. Çапла вара, тăшманăн 8 тральщикран тăракан отрядне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Латвири партизансен отрячĕ октябрь уйăхĕн 15 кунĕ хушшинче нимĕçсен фронт линийĕ патнелле каякан тăватă çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушени пула çар пурлăхĕ тиенĕ 32 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Партизансем нумай вырăнсенче чугун çула çĕмĕрнĕ. Çакна пула çулăн çав участокĕсенче поездсем çÿресси нумай вăхăта чарăнса ларнă. Партизансен пĕр ушкăнĕ хулана кĕнĕ те нимĕçсен бензин складне çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 3-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕнчи 144-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне тарса каçнă австриец Эдуард М. çапла каласа панă: «Австрире Германин час-часах бомбăсем пăрахакан районĕсенчен тарса пынă нимĕçсем туллиех. Тарнă нимĕçсем Австрие бомбоубежище тесе ят параççĕ. Пĕр уйăх каярах эпĕ хам çĕршывра пултăм. Пур çĕрте те çынсем пуса чикнĕ. Австрири темиçе пин хĕрарăм хăйсен фронтра вилнĕ ывăлĕсемшĕн йĕреççĕ, Гитлера ылханаççĕ. Нумаях пулмасть Оствальд ятлă пĕчĕк хулара Сталинград патĕнче çапăçса вилнĕ 40 çыншăн турра кĕл тунă. Юлашки вăхăтра вилнисем çинчен калакан татах темĕн чухлĕ повестка салатнă. Сандел ялĕнче 42 çемье Орелпа Белгород районĕнче вĕсен хурăнташĕсем вилни пирки хыпарсем илнĕ. Çыр[illegible] [illegible]рăм. Вăл çапла калать: «1938-мĕш çулта хăйсен çĕршывне сутнă австриецсен ушкăнне, нацистсем енне куçса, пурте кĕтерсе те: «Австриец Гитлер 70 миллион пруссака тытса тăрать», тесе кашкăрчĕ. Халь ĕнтĕ темиçе миллион австриец çапла калаççĕ: «Пруссаксем [illegible] Гитлер Австрие чуралантарчĕ те халь австриецсене пĕтерет». Манпа тĕл пулса калаçнă çынсем пурте гитлерла режим пĕтсе ларассине пĕтĕм чунтан кĕтеççĕ».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Хиславичи ятлă местечкăра пурăнакан çын нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен тискер ĕçĕсем çинчен çапла каласа панă: «Гитлеровецсем Хиславичи местечкине [illegible] тискер [illegible] çаратса тата вĕлерсе пурăнчĕç. 1941-мĕш çулхи октябрьте нимĕçсем [illegible] тесе МТС-а 150 çынна пустарчĕ те пурне те персе вĕлерчĕ. [illegible] апрель уйăхĕнче [illegible] вĕлерчĕ. Фашистсем [illegible] çĕр çынна [illegible] вĕлерчĕ. Аçăртран чĕрĕ юлнă 10 çулхи арçын ача тата 12 çулхи хĕрача çĕр[illegible] вилесем хушшинчен [illegible] тухнă. Вара [illegible] вĕсене нимĕç хуралĕ аллине лекнĕ те, вĕсене район начальникĕ Шванде [illegible] совет граждансене те [illegible] вĕлернĕ. Вĕлерес[illegible]. Мирлĕ халăха массăллăн вĕлерессине местечкăри нимĕç коменданчĕ Долерман, унăн заместителĕ Майс тата район начальникĕ Шванде ертсе пынă.

Хĕрлĕ Çар офицерĕсен, сержанчĕсен тата рядовойĕсен составне Совет Союз Геройĕн званине пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçу фронтĕнче Командовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çавăн чух хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн çак çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар офицерĕсен, сержанчĕсен тата рядовойĕсен ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн званине панă.

Совет Союз Геройĕн званине пĕтĕмпе 13 çынна панă. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çара тата фронта пулăшассишĕн

Хĕрлĕ Çара пулăшасси—пирĕн тивĕç

Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хĕвеланăçнелле хăвалать, ял хыççăн ял, хула хыççăн хула ирĕке кăларать. Совет ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе тылра хастарлăн ĕçлеççĕ.

Эпир те, «Большевик» заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, паян, Октябрь праçникне уявланă кун, фронта пулăшас тĕлĕшпе начар мар ĕçлени çинчен пĕлтерме пултаратпăр. Кăçал июнь уйăхĕнче пирĕн завод коллективĕ ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Наркомачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Вăл ялава эпир хамăр алăра çирĕппĕн тытса тăратпăр.

Октябрь уйăхĕнче эпир хамăр умма Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илес задача лартрăмăр. Кашни рабочи, работница, инженер, техник пĕр-перинпе ăмăртса хастарлăн ĕçлерĕ. Вăтамран шутласан, кашни рабочи нормăна 137 процент тултарнă. Нормăна тултарманнисем пачах çук. Коллективри рабочисенчен çурри ытла стахановецсем тата 39 проценчĕ ударниксем. Ĕç тухăçлăхне планпа пăхнинчен 22 процент ÿстернĕ. Çапла вара, октябрьте продукци туса кăлармалли плана 123 процент тултартăмăр. Продукци пахалăхне те чылаях лайăхлатрăмăр, чĕртаварсем виçĕ процент ытларах перекетлерĕмĕр.

Производствăна лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕç тунă. Рабочисемпе инженерла-техникла работниксем темиçе вунă сĕнÿ панă. Вĕсем темиçе пин тенкĕ перекетлеме май параççĕ.

Завод коллективĕн ситĕнĕвĕсенче эпĕ хамăн ĕçе те туятăп. Заводра эпĕ вунă çул хушши тимĕрçĕ пулса ĕçлетĕп. Вунă çул хушшинче мана темиçе хут та премисем парса палăртнă. Кăçал мана Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Хисеплĕ грамота тата ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕ «Отличнику соцсоревнования» значокпа наградăларĕç. Хисеплĕ наградăсене эпĕ стахановла ĕçпе ответлеме тăрăшатăп. Халĕ ялан икĕ е виçĕ норма тултаратăп. Нумай пулмасть мана пĕр ĕç хушрĕç. Вăл ĕçе эпĕ срокчен икĕ кун малтан пурнăçа кĕртрĕм.

Эпир тунă ситĕнÿсемпе лăпланса лармастпăр. Нимĕç захватчикĕсене хамăр тăван çĕршывран тĕпĕ-йĕрĕпех тасатма пулăшас шутпа лайăхрах ĕçлеме тăрăшатпăр. Фронта пулăшасси—пирĕн кулленхи тивĕç.

А. ЗАКАЛЯБИН,
Çĕмĕрлери «Большевик» заводри стахановец.

Уяв ячĕпе тунă ситĕнÿсем

СЕНТЕРВАРРИ, ноябрĕн 6-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри предприятисемпе промартельсен коллективĕсем Октябрь уявне ситĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн тăрăшса ĕçлерĕç. Апат-çимĕç комбиначĕн коллективĕ октябрьти плана 127 процент тултарнă. Райпромкомбинатри рабочисемпе служащисем çулталăкри плана Конституци кунĕ тĕлне тултарма пулнăччĕ. Вĕсем çулталăкри плана ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне 92 процент таран тултарнă. Комбинат повозкăсем тăвас плана ытлашшипех пурнăça кĕртнĕ.

Ф. ИЛЬИН.

* * *

Челноков юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводри комсомолецсемпе çамрăксем комсомол 25 çул тултарнă ятпа Сталин юлташ патне янă çырура фронта стахановла ĕçпе пулăшма сăмах пачĕç. Вĕсем хăйсен сăмахне ăнăçлăн пурнăça кĕртеççĕ. Комсомолка Корниенко юлташăн фронтовой бригади октябрьти плана 360 процент тултарнă. Комсомолка Татьяна Терентьева юлташ куллен 3—4 норма тăвать. Комсомолецсем хушшинче нормăна тултарманнисем пачах çук.

Заводри çамрăксен фронтовой бригадисем пурте плана ирттерсе тултараççĕ. Вĕсем сталинла вахтăна малалла тăсма йышăнчĕç.

СОЛОВЬЕВА.

* * *

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура кунсерен çĕнĕ ситĕнÿсем тăваççĕ. Забиякин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри Дьяченко мастер участокĕ юлашки вăхăтра графике яланах ирттерсе тултарать. Унăн участокĕнче ĕçлекенсем кашниех нормăна тултараççĕ, чылайĕшĕ темиçе норма тăваççĕ. Çапла, Морозов юлташ октябрĕн юлашки кунĕсенче рекордла ÿсĕм тунă. Вăл пĕр сменăра 7 норма тултарнă.

Çавăн пекех Старостин, Баленко юлташсем нормăна 420-шер процент, çамрăк рабочи Терентьев юлташ 320 процент, Капранова юлташ 200 процент ытла тултараççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: пĕр заводăн инструментальнăй цехĕнчи стахановец **Н. И. Офицеров.** Ана Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Н. ДАНИЛОВ фото-ÿкерчĕкĕ.

Фронт хушнă пек, унăн воинĕсем пек

Пирĕн колхоз кăçал, ытти çулхисемпе танлаштарсан ĕç вăйĕ тата туртăм вăйĕ сахал пулнă пулин те, ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ. Авăн çапас ĕçе эпир октябрĕн 21-мĕшĕнче вĕçлерĕмĕр. Çав вăхăт тĕлнех государствăна тырă, пахча-çимĕç, çĕрулми парса татрăмăр.

Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан çапăçура Хĕрлĕ Çар воинĕсем тăвакан чаплă ситĕнÿсем пирĕн колхозниксене ĕçре çĕнĕ ситĕнÿсем тума хавхалантараççĕ. Çĕнтерÿ сехетне çывхартас тесе, вĕсем ырми-канми ĕçлеççĕ. 63 çулхи Иван Семенов кăçал пĕччен 263 ĕçкунĕ турĕ. Ватă колхозниксем Аверкий Степанов, Виктор Капитонов кирек мĕнле ĕç хушсан та, вăхăтра тата лайăх пурнăçлаççĕ.

Колхоз ĕçĕнче хĕрарăмсем пысăк вăй пулса тăчĕç. Вĕсем халь пур ĕçе те хутшăнаççĕ, пример кăтартаççĕ. Анна Тихонова, Ольга Сорокина колхозницăсем, пур ĕçе те активлăн хутшăннă май, кăçал 250—300 ĕçкунне ситерчĕç.

Пирĕн колхоз членĕсем фронта пур майпа та пулăшма тăрăшаççĕ. Вĕсем хамăр воинсем валли 25 мăшăр алшиш, 20 мăшăр носки, 3 мăшăр çăматă пухса пачĕç. Фронтовиксен çемьисемпе вĕренекенсем валли те колхозра 4 килограмм çăм, 4 тир, 4 килограмм çу, 20 килограмм çăнăх пухнă. Çавăн пекех колхоз нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма 2 сурăх, 3 сысна уйăрса пачĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçланă хыççăн, эпир фронтпа çĕршыва планран ирттерсе ялхуçалăх продукчĕсем пама тытăнтăмăр. Ку таранччен пирĕн колхоз планран ирттерсе аш—30 килограмм, çăм—2 килограмм тата килес çулшăн натуроплата шучĕпе 109 центнер тырă пачĕ.

Ÿкерчĕк çинче: «Ким» колхозри (Первомайски район) малта пыракан 2-мĕш бригадăн бригадирĕ **В. Т. Тимофеев** юлташ.

Н. ДАНИЛОВ фото-ÿкерчĕкĕ.

А. ФАДЕЕВ,
Элĕк районĕнчи «1-ое мая» колхоз счетовочĕ.

ТЕГЕРАНРАН КИЛНĔ ТЕЛЕГРАММА

В. М. Молотова, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне

МУСКАВ

Совет Союзĕнчен тухса кайнă чухне эпĕ Эсир конференцире пирĕн ăнăçлă ĕçсене пĕлсе тата пĕр-пĕрне килĕштерсе ертсе пынипе çав тери хĕпĕртени çинчен Сире тепĕр хут каласа парасшăн. Çав вăхăтрах тата эпир Мускавра пурăннă чухне совет правительствипе халăхĕ мана тата Америка делегацийĕн членĕсене питĕ хапăл туса пăхнăшăн эпĕ Сталин Маршала пĕтĕм чунтан-чĕререн тав туни çинчен ăна каласа пама ыйтатăп. Эпир Мускава пыни пирĕншĕн çав тери кăмăллă тата интереснă пулчĕ.

КОРДЭЛЛ ХЭЛЛ.

КАИРТАН КИЛНĔ ТЕЛЕГРАММА

Молотов господина

МУСКАВ

Совет Союзĕнчен тухса кайнă чухне эпĕ Сире Мускавра пурăннă чухне мана çав тери лайăх пăхнăшăн тепĕр хут тав тăвасшăн. Эпир тĕл пулни яланах манăн асра тăрĕ, вăл эпир калаçса татăлнă пирки çеç мар, эпĕ нумай çынсемпе туслăн çыхăнса тăнине çĕнетнĕ пирки те яланах асра тăрĕ.

Кăнтăр еннелле эпĕ Сталинград тĕлĕнчен вĕçсе кайрăм, паттăр хулан ишĕлчĕкĕсене хам куçпа куртăм, çав хула вăл халь ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсемшĕн юмахри пек хула пулса тăчĕ. Малашне çав жертва пирĕн ĕçе хавхалантартăр.

Эпĕ çакна ĕненсе тăратăп: эпир Мускавра виççĕн тунă ĕç пирĕн халăхсем пĕр-перинпе туслă та юлташлă пурăнассин нумай çуллăха пыракан çирĕп никĕсне хывса хăварчĕ.

Сире тата Сирĕн çĕршывăра ырă сунатăп.

ИДЕН.

Аверелл Гарриман пичет представителĕсене калани

Виçĕ министрăн Мускаври конференцийĕн итогĕсем пирки Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Мускаври посолĕ В. А. Гарриман господин пичет представителĕсене çапла каласа панă:

«Эпĕ çакăнтан пуçласшăн: Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем лайăх аталанса пырассине эпĕ кирек хăçан та çирĕп ĕненсе тăнă. Конференци ĕçĕсем ăнăçлă пуласси не эпĕ кĕтсе тăнă. Анчах та эпĕ çав тери нумай ыйтусемпе тата çав тери хăвăрт калаçса татăлнă пирки хытă савăнатăп. Конференци темиçе ыйту лартрĕ, çав ыйтусем пирки США, Англия тата Совет Союзĕ пĕр-перинпе малалла калаçĕç.

Мускавра çар миссийĕ туни çинчен эпĕ каласа панăччĕ. Эпĕ калани, ман шутпа, вăрçă ĕçĕсене пĕрлешсе туса пынă чухне эпир вăрçă ыйтăвĕсемпе снабжени ыйтăвĕсем тĕлĕшпе мĕнле ĕçлессине ăнлантарса парать.

Кунсăр пуçне, паллах ĕнтĕ, политика тата экономика тĕлĕшпе нумай ыйтусене сÿтсе-явнă. Вĕсенчен нумайĕшне виçĕ çĕршыв сÿтсе-явĕç, е, конференци пĕлтерĕвĕнчи сăмахсемпе каласан—«виçĕ государствăн представителĕсем çав государствăсен столицисенче пĕр-перинпе хальхи дипломатиллĕ майсемпе канашлас йĕркепе сÿтсе-явĕç. Çакă вăл акă мĕне пĕлтерет: çак ыйтусем тĕлĕшпе эпĕ ĕнтĕ Молотов господинпа тата Арчибальд Кларк Керр сэрпа таччăн çыхăнса ĕçлĕп.

Конференцире халиччен эпир ситĕлĕклĕ усăмлăн шухăшламан ыйтусем пирки ăшă кăмăлпа калаçнă. Çапла сÿтсе-явни пирĕн шухăшсене лайăхрах палăртма пулăшрĕ. Çаксем вĕсем пире питĕ хавхалантараççĕ.

Хăшпĕр ыйтусем халех татса памалли ыйтусем пулса тăраççĕ, теприсем—вăрçă хыççăнхи тапхăр çинчен калакан ыйтусем пулса тăраççĕ. Çак юлашки ыйтусем хушшинче чи çывăх вăхăтрах сÿтсе-явмаллисем те пур, ыттисем—нумай кайран сÿтсе-явмаллисем.

Эпир çав ыйтусене, вĕсен пахалăхне кура тата вăрçă хальхи вăхăтра ыйтнине шута илсе, йĕркипе пăхса тухăпăр. Вăрçăпа çыхăнса тăракан ыйтусем пĕрремĕш вырăнта тăраççĕ, эпир халь тăвакан ĕçсем вара вĕсем тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕнтерес куна çывхартмалла.

Конференци пĕлтерĕвĕнчен эпир пĕлетĕр ĕнтĕ: виçĕ çĕршыв хăйсен çĕршывĕсенчи халăхсен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе пĕрле ĕçлеме калаçса татăлнă.

Хальхи вăхăтра пуринчен те ытларах тимлĕн пăхса тухмалли ыйту вăл, ман шутпа, США Совет Союзне унăн тустарнă районĕсене çĕнĕрен ура çине тăратма тата вăрçă тунă ытти сиенсене пĕтерме пулăшасси пулса тăрать. Кунта Америкăн промышленность хăвачĕпе тата сутуилÿ флочĕпе усă курнă чухне каллех чи малтан вăрçă нушисене шута илес пулать, анчах та эпир халь çар производствине кансĕрлемесĕр тума пултаракан пĕр ĕç пур. Эпир США-ран ыйтакан оборудование хатĕрлемелли срокĕсене нумай кĕскетме пултаракан программăсене, плансене тата тĕплĕ проектсене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлеме пултаратпăр.

Çав тери нумай асап курнă вырăс халăхне Америка халăхĕ чунтан-чĕререн кăмăллать, американецсем вырăссене пысăкрах пулăшу парасшăн. Пирĕн заводсем Совет Союзне кирлĕ машинăсемпе оборудовани хатĕрлеççĕ. Çак ĕçе туса, эпир хамăр халăха вăрçă тапхăрĕнчен мирлĕ тапхăра куçма пулăшăпăр.

Эпĕ тата посольство штачĕ ĕçлемелли хăшпĕр ыйтусем çаксем ĕнтĕ».

„Конференцире тунă килĕшÿ тĕрĕссипе мирĕн малтанхи проектне хатĕрлесе хунă“

Турцири хаçатсем çырни

СТАМБУЛ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Пур хаçатсем те ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕн Мускаври конференцийĕн пĕлтерĕвĕпе декларацийĕсене пĕтĕмпех е кăшт кĕскетсе пĕрремĕш страницăра пичетленĕ, вĕсен ячĕсене пысăк саспаллипе пухнă.

Ирхине тухнă хаçатсенчен «Ватан» хаçат çеç çав конференцин ĕçĕсем çинчен çырма ĕлкĕрнĕ. Редакци çырнă статьяра çакна палăртнă: пĕтĕм тĕнче çав конференцие тимлĕн сăнаса тăчĕ, конференци ĕçĕсем ăнассине кĕтнине конференци решенийĕсем тĕрĕсе кăларчĕç. «Апла пулсан та, — тесе çырать «Ватан»,— ĕнер пичетленĕ пĕлтерÿ çурăлса кайнă бомба пекех пулса тăчĕ. Мускав вăрçă ĕçĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе те, вăрçă хыççăнхи пурнăça йĕркелес тĕлĕшпе те решенисем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Мускавра тунă килĕшÿ çĕршывсене пĕрле çирĕп çыхăнса ĕçлеме май парать. Вăрçă тĕнĕл держависем пурте пĕр сăмахсăр парăнмиччен вăрçмалла, тесе йышăннă. Германия союзникĕсем пĕр-перинпе хирĕçсе каяссине шанса тăнине çак решени пĕтĕмпех çĕмĕрсе парахĕ. Мускаври килĕшÿ тĕнчери пулас йĕрке çинчен пĕтĕмĕшлĕ каласа парать. Конференцин пĕлтерĕвĕ никама пăхăнман Европăн сăн-сăпатне тепĕр хут кăтартса пачĕ. Килĕшÿ тĕрĕссипе мирĕн малтанхи проектне хатĕрлесе хучĕ. Конференци решенийĕсем пĕр хăйсем кăна та вăрçă срокне кĕскетме пулăшĕç тесе шанса тăма пулать, мĕншĕн тесен вĕсем тĕнĕл держависен лагерьне хытă шухăшлаттарчĕç».

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН ИЛСЕ ПЫНА РАБОЧИСЕНЧЕН ХĂРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Берлинер Берзенцейтунг» ятлă хаçат çакна паллă туса çырать: Германие ют патшалăхсенчен илсе килнĕ рабочисем Германие хирĕçле агитацие хапăлласа итлеççĕ. Çавăн пек агитаци «Германие каторга тĕрми пек туса кăтартма» тăрăшать. Çав хаçат, нимĕç халăхне хăратса, çакăн çинчен асăрхаттарать: «Ют патшалăхсенчен илсе килнĕ рабочисенчен пăрăнарах тăмалла», вĕсемпе çыхăнмалла мар, тесе çырать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

ноябрĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

НАРОДНЫЕ МСТИТЕЛИ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать. Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ПОДВОДНАЯ ЛОДКА Т—9

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НГ 410 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 ,84 п. л.